25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
27
ЫТЛАРИКУН
251 (6186) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Иртнĕ эрнере, октябрĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшне çитиччен, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсем çинче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 114 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 51 самолет пĕтнĕ.

* * *

Октябрĕн 24-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци тăшманăн 2 танкне тата войскăсемпе грузсем тиенĕ 40 автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 4 батарейине пусарнă, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ, противникăн пехотине 5 рота таран салатса янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Пирĕн войскăсем противникăн танкĕсен тата пехотин йышлă атакисене сире-сире янă. Хулана геройла хÿтĕлекенсем кашни урама, кашни çурта хÿтĕлеççĕ. Пысăк çухатусем тÿссе тăшман рабочи поселокăн икĕ урамне йышăннă. Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн йышлăрах вăйĕсен пилĕк атакине сирсе янă, нимĕçсен 4 танкне тата 260 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Гвардеец-минометчиксем сасартăк вăйлăн пере-пере 3 танка çунтарса янă, противникăн 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре уйрăм участоксенче пирĕн чаçсем активлăн çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем, противник хытă хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăннă. Çак пунктшăн пынă çапăçусенче румынсен 600 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн [illegible] ... 350 [illegible] тытнă.

* * *

Летчиксем-штурмовиксем пĕр кун хушшинче противникăн 24 орудине, 6 миномета, 17 пулемет точкине, 29 автомашинине, горючи тултарнă пĕр цистернине тата 8 прожектора пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем хăйсен [illegible] рубежсене аванлатнă. Юлашки вăхăтсенче пысăк çухатусем тÿснĕ противник хăйĕн активлăхне палăртман. Совет летчикĕсем сывлăш çапăçăвĕсенче нимĕçсен 3 самолетне персе ÿкернĕ, 4 бронемашинине тата 12 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре противник Хлябич командир пулса ертсе пыракан тинĕс пехотин подразделенийĕн тылне кĕрсе кайнă пулнă. Краснофлотецсем контратака туса хăйсен позицийĕсене каялла илнĕ. Çапăçусенче румынсен пехотине икĕ ротăна яхăн пĕтерсе тăкнă. Пулеметчик Иванов противникăн 25 салтакне, снайпер Бардиян юлташ 7 салтака вĕлернĕ. Тепĕр участокра Екугелов лейтенант командир пулса ертсе пыракан разведчиксен групли противникăн тылне кĕрсе кайса штаб автобусне тапăннă. Машина çинче нимĕçсен 20 летчик-офицерĕ пулнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене вĕлерсе пĕтернĕ, унтан, вĕсен çумĕнче тупнă документсене илсе, хăйсен чаçĕсене таврăннă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн чаçсем противникăн пĕчĕк групписемпе тытăçса илнĕ. Нимĕç пехотин икĕ взвочĕ пĕр шыв урлă каçма хăтланнă. Колесников командирăн отделенин пулемет расчечĕ кимĕсем çине пулеметпа пеме тытăннă. Нимĕçсене нумайĕшне вĕлернĕ, хăшĕ-пĕрисем шыва путнă.

* * *

Орел облаçĕнчи пĕр районра çапăçакан партизансем пĕр уйăх хушшинче нимĕç оккупанчĕсен 7 поездне сирпĕнтерсе янă. 7 паровоз, войскăсем тата грузсем тиенĕ 90 вагонпа платформа пĕтнĕ. Унсăр пуçне çак отрядăн партизанĕсем 46 автомашинăна тата горючи складне çунтарса янă.

Тепĕр отрядри партизансен группи халăх пурăнакан пĕр пунктра вырăнаçнă нимĕç гарнизонне тапăннă. [illegible] партизансем 93 гитлеровеца вĕлернĕ, 18 [illegible] тытса илнĕ. Трофейсем тытса илнĕ: вĕсен шутĕнче 39 винтовка, 4 станковăй тата 19 ручной пулемет, [illegible] противотанковăй [illegible], 100 мина, 75 снаряд тата темиçе пин патрон.

* * *

Нимĕçсен фашистла каратĕлĕсем Смоленск облаçĕнчи Слободка ялĕнче çук тискер ĕç тунă. Икĕ кун хушшинче гитлерла вăрăсемпе бандитсем ялти мирлĕ халăхран мăшкăлланă, вĕсем 8.000 пăт çĕр улми пама ыйтнă. 10 старике гитлерла ирсĕрсем персе пăрахнă. Алексей Гомунов колхозник патĕнче ухтару тунă чух Хĕрлĕ ялав тупнă, [illegible] Бандитсем старике нумайччен мăшкăлланă, [illegible]

Октябрĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 26-мĕшĕн ирхи [illegible] пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Артиллерипе тата минометсемпе вăйлăн персе тата хатĕрленнĕ хыççăн противник пирĕн заводсен районĕнчи позицийĕсене тепĕр хут атакаланă. Пирĕн боецсем [illegible] атакисене хастарлăн сирсе тăнă, ăна пысăк çухатусем тÿстернĕ. Пирĕн артиллери кăна нимĕçсен пехотин пĕр полк таран салтакне [illegible], пĕр пайне пĕтерсе тăкнă, противникăн 14 танкне персе çĕмĕрнĕ тата минометсен 15 батарейине пусарса лартнă. Темиçе хутчен штык вĕççĕн çапăçнипе вĕçленнĕ хаяр çапăçусем хыççăн противник заводсенчен пĕрне кĕрсе кайнă. Пирĕн чаçсем [illegible]

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра.

Софири фашистла „выставкăра" Совет Союзĕ çинчен элекленине хирĕç Совет Правительстви панă протест

Нумай пулмасть Софире гитлеровецсен юрама тăрăшакан Болгари влаçĕсем пулăшса хутăлесе пынипе гитлеровецсем тунă «выставка» уçăлнă: вăл вырăс халăхне пĕтĕм Совет Союзне [illegible] элек сарма ятарласа хатĕрленĕ [illegible] фальсификаци [illegible] Германи [illegible]

Октябрĕн 6-мĕшĕнче Софири Совет посланникĕ Лаврищев юлташ Болгари [illegible] ютçĕршыв ĕçĕсен министерствине Совет Правительстви çырнă нотăна панă. Вăл нотăра çакна палăртнă: «Выставкăра Совет Союзĕн тăшманĕсем Болгари халăхĕ СССР халăхĕсене чунтан кăмăлласа хисепленине хавшатас шутпа хатĕрленĕ фальсификацисем пур» тенĕ. Нотăра малалла «çав тивĕççĕр предприяти Совет Союзĕ çинчен элекленине тата ăна тăшманла пулнине» кăтартса панă. Вăл «Болгария дипломатиллĕ çыхăну тытса тăракан государство çинчен ирсĕррĕн элекленине» кăтартса пани пулса тăрать, тенĕ. Нотăра тата çакна кăтартса панă: Болгари правительстви «темĕнле сăлтавсемпе Совет Союзĕн халăхĕсем çинчен элеклессине хÿтĕлесе тăрать, çакă вăл вырăс халăхĕпе Болгари халăхĕ халиччен пĕр-пĕринпе çыхăнса тăнă йăлана хирĕç пырать, вăл фашистла Германире СССР халăхĕсене хирĕç çавăн пек хăтланнине тепĕр хут туса кăтартни çеç пулса тăрать», тенĕ. Совет правительстви,—тенĕ юлашкинчен нотăра,—çак тĕлĕшпе Болгари правительстви татăклă протест парать тата çак ĕç Болгари правительстви Совет Союзне хирĕç тăшманла ĕç-пуç тунине кăтартакан япала пулса тăрать тесе калать». [illegible]

Болгарин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ çак протеста ответлесе октябрĕн 10-мĕшĕнче Совет Союзĕн Софири миссийине нота панă. Çак нотăра вăл, Совет правительствин протестне [illegible] «Выставка» вăл «Совет правительствипе СССР руководителĕсене хирĕç пымасть», тет. Совет правительствин ноти Совет Союзне хирĕç пыракан çак ирсĕр болгарла-гитлерла ĕç элекле тата фальсификаторла пулса тăнине кăтартса пани çинчен Болгарин нотинче пĕр сăмах та каламан.

Октябрĕн 22-мĕшĕнче Совет Союзĕн Софири посланникĕ Лаврищев юлташ Болгарин премьер-министрне тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Филов господина нота панă. Вăл нотăра Совет правительстви çапла каланă: Совет правительстви «Совет Союзĕпе Совет халăхĕ тĕлĕшĕнчен элекле-тăшманла выставка тунă пирки Болгари правительстви ăнлантарса пани пĕрех те юрăхлă мар» тесе шутлать тата «Совет правительстви хăй октябрĕн 6-мĕшĕнче панă нотăра кăтартнă татăклă протеста пĕтĕмпех тепĕр хут çирĕплетсе парать» (ТАСС).

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН ЮЛТАША

ХАКЛĂ ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ.

Эпир, Чăваш республикинчи çамрăксем, Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултаракан уяв çывхарнă ятпа митинга пухăнса, Сире, хамăрăн аслă çулпуçа, тусăмăра тата учителе хĕрÿллĕ салам яратпăр!

Çирĕм пилĕк çул каярах, 1917 çулти Октябрьте, Ленинпа эсир, Сталин юлташ, ертсе пынипе пирĕн аттесемпе аслă пиччесем ирĕклĕ пурнăçа хăйсен юнĕпе çĕнсе илчĕç.

Ĕмĕрсем хушши патша палачĕсен йытти айĕнче пурăннă, вырăс тата ытти буржуазипе помещиксен пусмăрне тÿссе ирттернĕ чăваш халăхĕ Октябрьти Социализмлă Аслă революцие пула Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕртан правăллă пулса тăчĕ тата коммунистсен партийĕ ертсе пынипе вĕсемпе пĕрле хăйĕн телейне турĕ. Тăван çĕршыври мĕнпур çамрăксенни пекех, пирĕншĕн те, чăваш çамрăкĕсемшĕн те, пĕтĕм çулсем уçăлчĕç, эпир мĕнпур профессисене вĕренме пултаратпăмăр, пирĕн ĕмĕтсемпе шанчăксем пурнăçланса пыратчĕç.

Октябрьте çĕнсе илнисене тăшман пирĕнтен йăлтах туртса илесшĕн, пире ирĕксĕрлесе парăнтарасшăн тата вĕлерсе пĕтересшĕн. Нимĕçсем пирĕн çĕр çинче тĕлĕнмелле ирсĕрлĕхсем тăваççĕ. Вĕсем вут тĕртеççĕ, саратаççĕ, пирĕн çынсене çакаççĕ, вĕлереççĕ, хăйсем патне ылханлă каторгăна хăваласа каяççĕ. Мĕн чухлĕ асап, мĕн чухлĕ йывăрлăх тÿсет пирĕн халăх! Анчах пирĕн çĕнтерÿ тăвас ирĕке нимĕн те хавшатма пултараймасть. Эпир, ирĕклĕ çĕршывра çуралса ирĕклĕ çĕршывра ÿснĕскерсем, нихăçан та чурасем пулмастпăр. Эпир хамăрăн ирĕклĕхе, хамăрăн телейлĕхе, хамăрăн таса та сутă пурнăçа кĕрешÿре сыхласа хăваратпăр!

Эпир тăван çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха ăнланатпăр. Тăшман халĕ те пирĕн çĕршыв ăшнелле кĕме тапаçланать. Çапăçу хирĕнче халĕ Совет государствин малашнехи кун-çулне татса параççĕ. Аслă Октябрьте çĕнсе илнисене сыхласа хăварма тăван çĕршыв приказ панă. Чăваш республикинчи çамрăксем тăван çĕршыв чысĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешнĕ çĕре хăйсен пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пурнăçне парĕç тесе шантарса калатпăр Сире, Сталин юлташ.

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Сывă пултăр Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни!

Сывă пултăр пирĕн атте, тус тата учитель Сталин юлташ!

Сталинграда мухтавлăн хÿтĕлекенсене

ХАКЛĂ ЮЛТАШСЕМ!

Чăваш республикинчи çамрăксен митингĕн участникĕсем Сире, Сталинграда мухтавлăн хÿтĕлекенсене, пĕтĕм чĕререн хĕрÿллĕ салам яраççĕ.

Эпир сирĕн геройла кĕрешĕве пысăк тимлĕхпе сăнаса тăратпăр, эсир çирĕппĕн те паттăррăн кĕрешнĕшĕн савăнса мухтанатпăр. Сирĕн кĕрешÿри паттăрлăх пире тылра ырма-канма пĕлмесĕр, вăйлăн ĕçлеме хавхалантарать.

Чăваш çамрăкĕсем Совет Союзĕнчи мĕнпур çамрăксемпе пĕрле çĕнтерÿшĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн комсомолецсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ вырăссемпе, украинецсемпе, тутарсемпе тата Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур тăванла халăхсемпе пĕрле отечественнăй аслă вăрçă хирĕнче алла-аллăн çапăçать, Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнсе илнисене хÿтĕлет. Чăваш Комсомолĕ вĕрентсе çитĕнтернĕ пирĕн 4 земляк Совет Союзĕн Геройĕсем пулса тăчĕç. Вĕсен фронтри çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, пирĕн тылри çамрăксем тăшмана çĕнтермелли хĕçпăшала ывăнма пĕлмесĕр туптаççĕ, заводсенче, шахтăсенче тата колхоз хирĕсенче ĕç тухăçлăхне кунран-кун ÿстерсе пыраççĕ.

Сталин хулине хÿтĕлекен паттăр юлташсем! Нимĕç тискер-кайăкĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырăр. Сталинград çĕрне мăшкăллама ан парăр. Сирĕн паттăр ĕçĕрсене çĕршыв нихăçан та манмĕ. Фронтри юлташсем, эпир Сире ытларах та ытларах хĕçпăшалсем, боеприпассем, тырпул, аш-какай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парса тăрăпăр.

Нимĕç оккупанчĕсене — вилĕм!

Сывă пултăр геройла Сталинград тата ăна хÿтĕлекенсем.

Сывă пултăр Аслă çулпуç, учитель тата тусăмăр Сталин юлташ!

Чăваш республикинчи çамрăксен митингĕ

Октябрĕн 25-мĕшĕнче, Шупашкарта, Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни çывхарнă ятпа Чăваш республикинчи çамрăксен митингĕ пулса иртрĕ.

Митинга ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ **Петр Михайлов** уçать.

— Октябрьти Социализмлă революци, —тет Михайлов юлташ,—çамрăк ăру валли телейлĕ те ирĕклĕ пурнăç туса пачĕ. 1917 çулти ноябрĕн 7-мĕшĕ вăл— эпир çуралнă кун. Выçлăх, чухăнлăх, пусмăрпа мăшкăл,— акă мĕнле шăпа пулнă ĕлĕк чăваш халăхĕшĕн тата унăн çамрăкĕсемшĕн. Совет влаçĕн тивлечĕпе çеç эпир совет халăхĕсен тăванла çемьинче савăнса пурăнма, хамăра килĕшекен профессисене суйласа илсе вĕренме ирĕк илтĕмĕр.

Совет çамрăкĕсем 25 çул хушши хăйсен социализмлă государствине çирĕплетсе пычĕç, фабрикăсемпе заводсем, колхозсемпе совхозсем турĕç, наукăпа техникăна вĕренсе алла илчĕç, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнма тытăнчĕç. Хамăр аттесемпе аслă пиччесем хăйсен юнĕпе çĕнсе илнĕ çав телей çине хаяр та тискер тăшман тапăнчĕ.

Орденлă Чăваш республикинчи çамрăксем пĕтĕм халăхпа пĕрле тăшмана çĕнтерессишĕн кĕрешеççĕ. Пирĕн комсомолецсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ фронтра паттăррăн çапăçаççĕ. Чăваш Комсомолĕ пăхса çитĕнтернĕ 4 земляк Совет Союзĕн Геройĕсем пулса тăчĕç. Вĕсен фронтри ĕçĕсемпе хавхаланса, тылра юлнă пирĕн çамрăксем фронта пулăшас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ.

Сăмах Сталинград районĕнчи çапăçусен участникне гварди лейтенантне **Павел Макшанова** параççĕ.

—Тăван çĕршыв пире Сталинграда хÿтĕлеме, фашистсем совет çыннисене мăшкăл кÿнĕшĕн, вĕлернĕшĕн, саратнăшăн тавăрма янă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, танкистсемпе артиллеристсем, минометчиксемпе снайперсем, бронебойщиксемпе пехотинецсем тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине аркатаççĕ, тăшман хăйĕн вилĕмне тупать. Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксенчен чылайĕшĕ Сталинград районĕнчи çапăçура геройла çапăçнăшăн орденсемпе медальсем илнĕ тата халĕ нумайĕшне наградăлама тăратнă.

Сталинграда тăшмана памастпăр! Сталинград патĕнче тăшмана çĕнтеретпĕрех!

Макшанов юлташ çамрăксене тылра ырми-канми ĕçлеме чĕнет.

Трибуна çинче—Н-ски заводра ĕçлекен **Валентина Сумленкова.** Вăл митинг участникĕсене заводри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен ячĕпе хĕрÿллĕн саламлать.

— Эпир пурте—отечественнăй аслă вăрçăн участникĕсем. Çакна пирĕнтен кашниех ăнланать. Эпир хамăрăн мĕнпур вăй-халпа пĕлĕве, кирлĕ пулсан, хамăрăн пурнăçа та тăшмана çĕнтерес сехете çывхартас çĕре пама хатĕр. Комсомолец Калиганов фронта тухса кайсан, эпĕ унăн вырăнне тăтăм, çĕнĕ профессие хăвăрт хăнăхса çитрĕм, хамăн станока боец хăйĕн винтовкине пĕлнĕ пекех пĕлетĕп. Эпĕ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригади, октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн, ĕç нормине кулленех икĕ хут ирттерсе тултарса пырать. Заводри 100 çамрăк ытла двухсотниксен ретне тăчĕç.

Сталинграда мухтавлăн хÿтĕлекенсем патне саламлă çыру ярас тесе панă сĕнĕве митинг участникĕсем тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Керчь хули çывăхĕнчи çапăçусенче пулнă связистка **Валентина Торопова** митингра хумханусăр сăмах калать. Вăл Хĕрлĕ Çар ретĕнче кĕрешекен хĕрачасен геройла ĕçĕсем çинчен, чарăнса тăрать.

Елчĕк МТС трактористĕ **Аркадий Абдулкин** социализмлă çĕрĕç работникĕсен паттăрла ĕçĕ çинчен калать.

— Елчĕк МТС-ĕн коллективĕ,—тет вăл, —çулталăк планне 111 процент тултарчĕ. 15 лаша вăйлă кашни тракторпа 860-шер гектар çĕр ĕçлемелле пулнă пулсан, эпир кăçал кашни трактор пуçнех 446-шер гектар çинчи ĕçе турăмăр. Çав вăхăтрах 15 пин килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Пур комсомлецтрактористсемпе комбайнерсем те хăйсен заданийĕсене ирттерсе пурнăçланă.

Пирĕн МТС коллективĕ танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума укçа-тенкĕ пухас ыйтăва пуçарчĕ. Çак ĕç валли эпир 51.400 тенкĕ пухнă та.

Митингра Чăвашсен Государственнăй Педагогика Институтĕнчи çамрăксен ячĕпе **Вера Самарина,** Шупашкар хулинчи пионерсен ячĕпе **Зина Шарко,** Чăвашсен Ялхуçалăх Институчĕн профессорĕ **Николай Замятин,** ВЛКСМ Вăрмар райкомĕн секретарĕ **Илья Залевский,** Улатăрти паровозсем юсакан заводри токарь **Галина Трифонова** юлташсем тухса калаçрĕç.

Митинга пухăннисем ВКП(б) Чăваш Обком секретарĕн **Ахазов** юлташăн хĕрÿллĕ сăмахне пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

Митинг халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Шупашкар хулинчи парти активĕн черетлĕ пухăвĕ перекетлĕх ыйтăвне сÿтсе-яврĕ.

Çак ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн тата хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ доклад туса пачĕ.

Совет халăхĕ Германи фашизмне хирĕç туса пыракан отечественнăй вăрçăн хальхи саманчĕ çинче чарăнса тăрса, Чарыков юлташ çакна палăртрĕ: халĕ, урса кайнă гитлерла йыткĕтĕвĕсем совет государствин пурнăç центрĕсем патне талпăннă вăхăтра, тăшман Атăлпа Кавказа хăратса тăнă вăхăтра, металăн кашни грамĕ, горючин кашни килограмĕ, тĕштырăн кашни центнерĕ уйрăмах хаклă пулса тăрать.

— Пирĕн,—тет Чарыков юлташ,—чĕртавара, материалсене, электроэнергие, топливăна, продовольствие çирĕп перекетлесе тыткалама вĕренмелле, мĕншĕн тесен çавсем пурте вĕсем вăрçă туса пыма, хĕçпăшал туптама, пирĕн фронтăн тĕрекне—пирĕн тыла çирĕплетме кирлĕ. Пурне те перекетлесси—вăрçă вăхăтĕнчи закон. Перекетлĕхĕн çирĕп режимне тытса пырассишĕн халĕ партипе совет организацийĕсен куллен çине тăрса кĕрешмелле. Кашни пĕр пус укçана шутлăн та перекетлĕн тыткаласси, метала, чĕртавара, топливăпа электроэнергие перекетлесси, оборудованипе инструмента типтерлĕн тыткаласси, çынсен сахал йышĕпех фронтпа тăван çĕршыва ытларах та ытларах продукци туса парасси—çакă вăл мĕнпур парти организацийĕсен вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи питех те кирлĕ задачи пулса тăрать.

Чарыков юлташ производство ĕçне хуçасăрла, тимсĕррĕн пăхнин чылай тĕслĕхĕсене илсе кăтартса парать. Çăкăр комбинатĕнче сентябрь уйăхĕнченех çăкăр пĕçерсе кăлармалли нормăна тултарса пыман, çавна пула вуншар тонна çăкăр парса çитереймен. Заводсенчен пĕринче детальсем туса хатĕрленĕ çĕрте тимĕр листисен лаптăкĕсемпе 40 процент чухлĕ кăна усă кураççĕ. Техно-ткацки фабрикăра пĕр сентябрь уйăхĕнче кăна арланă çипĕн отхочĕсем 100 килограмм ахаль пĕтнĕ, çав çипрен 10 пин метр тăрщшĕ пахха хăю тĕртсе хатĕрлеме май пулнă. Чăлха çыхакан фабрикăра тĕрлĕрен тăккаланчăксем пухăнаççĕ, пĕр уйăх хушшинче пухăннă çав тăккаланчăксенчен трикотаж изделийĕсем 2 пин штукăна яхăн çыхса хатĕрлеме пулать. Ку вăхăтрах парти хула комитечĕ те, хула совечĕн исполкомĕ те çав отходсемпе усă курас тĕлĕшпе халиччен нимĕн те туман. Хулари нумай предприятисем вагонсемпе баржăсене простой тутараççĕ.

Çавнашкал хуçасăрлăха хирĕç татăклă кĕрешÿ пуçламалла. Çавăн пек хуçасăрлăха пĕтермелли условисенчен пĕри вăл—материалсемпе япаласене тĕплĕн шута илсе пыни пулать. Учет çук пиркиех тата материалсемпе япаласене куллен тĕрĕслесе тăман пиркиех чĕртаварсемпе материалсене, хатĕр продукцие çĕршер пин тенкĕлĕх вăрласа пĕтерни çинчен калакан тĕслĕхсем сахал мар. Çапла, сăмахран Н-ски заводра тĕплĕ учет çук пирки виççĕмĕш кварталта чĕр таварсемпе материалсене миллион тенкĕлĕх ытла ытлашши расходласа пĕтернĕ. Учет ĕçне ытти чылай предприятисенче те япăхтарса янă.

— Руководительсемпе парти организацийĕсен секретарĕсем предприятисенчи учета организацилес ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ, вĕсем партин 18-мĕш конференцийĕ—«тĕрĕс учетсăр предприятие тытса пыма çук», тесе кăтартса пани çинчен манса кайнă.

Чылай фактсене кăтартса парса, Чарыков юлташ çакна палăртать: пирĕн предприятисенче технологи дисциплинине пăснине пула та чĕр таварсемпе материалсене чылай вырăнсăр расходласа пĕтереççĕ. Предприяти руководителĕсен тата парти организацийĕсен технологи дисциплинине çывăх вăхăтсенчех татăклăн çирĕплетмелле, технологи процесĕ тĕлĕшпе инструкцисем туса хатĕрлес тата вĕсене çирĕппĕн тытса пырас ĕçе пурнăçа кĕртмелле.

Перекетлĕх кÿрекен паха резервсенчен пĕри вăл—çавăн пекех тата дефицитлă метариалсене сахалтарах дефицитлă материалсемпе е вырăнти материалсемпе улăштарни пулса тăрать. Çав вăхăтрах çак ĕçе предприятисенче халлĕхе е вăхăтран вăхăта кăна туса пыраççĕ-ха. Изобретательствăпа рационализаци ĕçĕ çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Парти организацийĕсен изобретательсемпе рационализаторсене ĕçлеме тивĕçлĕ май туса парассишĕн, вĕсен хисепне ÿстерессишĕн тăрăшмалла. Изобретательсемпе рационализаторсен пуçарулăхĕ оборона нушисем валли пысăк средствăсем перекетлесе хăварма, ĕçлекенсен сахал йышĕпех фронт валли ытларах продукци туса кăларма май парать.

Оборудованипе хуçалăхлăн усă курмалла, ĕç вăхăчĕ ахаль сая кайнине пĕтермелле. Хулари чылай предприятисенче ĕç дисциплини çителĕксĕр. Парти организацийĕсем рабочисем хушшинче, уйрăмах пысăк йышлă пулса тăракан çамрăк рабочисем хушшинче, политикăллă ăнлантарулла ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ-ха. Çамрăк чăваш рабочийĕсен ытларахăш пайне политикăллă агитаципе çавăрса илмен.

Чарыков юлташ топливăпа электроэнергие çирĕппĕн перекетлесси çинче уйрăммăн чарăнса тăрать. Докладчик топливăна сиенлĕн салатса пĕтерни çинчен калакан фактсене кăтартса парать. Топливăна ытлашши расходласа пĕтерни çине халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, стратегиллĕ чĕртавара растрата туни çине пăхнă пек пăхмалла. Пур çĕрте те топливо расходламалли çирĕп нормăсем тумалла, вĕсене мĕнле тытса пынине куллен контроль туса тăмалла, вĕсене пăсма памалла мар. Электроэнергипе усă курассине чакарас тĕлĕшпе горком туса ирттернĕ ĕçсем хăйсен хăшпĕр результачĕсене пачĕç, уйрăмах çакă вăл пысăк заводсенче сисĕнет, вĕсем электроэнергие чылай нумай перекетлесе хăварма пултарчĕç. Çакă вăл электроэнергие перекетлес тĕлĕшпе тума тытăннă пысăк ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. Электроэнергин кашни киловатт-сехечĕшĕн, ăна май килнĕ таран ытларах перекетлесе хăварассишĕн предприятисенчи хуçалăхпа парти руководителĕсен кашнин, кашни рабочипе служащин, кашни совет патриочĕн кĕрешмелле.

Чарыков юлташ производство культурине ÿстерессишĕн çине тăрса кĕрешме кирлине палăртать.

— Ĕçри пысăк культурăлăх пĕтĕм предприяти ĕçĕн перекетлĕхне татса паракан фактор пулса тăрать,—тет докладчик.—Çав культурăн пĕрремĕш тĕслĕхĕ вăл—графикпа ĕçлени. Графика производствăна çине тăрсах кĕртсе пымалла.

Докладăн юлашки пайĕнче Чарыков юлташ перекетлĕх режимне пурнăçа кĕртсе пырас майпа парти организацийĕсен агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатма кирли çинчен чарăнса тăчĕ.

— Граждан вăрçи çулĕсенче, ун хыççăн социализмлă строительствăн мирлĕ çулĕсенче Ленинпа Сталин перекетлĕх режимĕшĕн кĕрешессине мĕнле пысăк вырăна хунине, халĕ, отечественнăй вăрçă условийĕсенче, чĕртаварпа топливăна тата электроэнергие май килнĕ таран ытларах перекетлени мĕнле вырăн йышăнса тăнине халăха тĕплĕн ăнлантарса памалла. Нимĕçсем пирĕн Донбаса, Криворожьене тата ытти районсене вăхăтлăха тытса илнĕ пирки пирĕн çĕршыв мĕнле йывăрлăхсем тÿснине рабочисемпе служащисене каласа памалла. Чĕртаварпа топливăна расходлассине мĕнле майсемпе чакармаллине тата çакă вăл пирĕн çĕршыва, пирĕн Хĕрлĕ Çара мĕн чухлĕ усă кÿнине кулленхи усăмлă тĕслĕхсемпе кăтартса памалла. Кунта нагляднăй агитаципе анлăн усă курас пулать. Перекетлĕхшĕн кĕрешес ыйтусене социализмлă ăмăртăва малалла сарса пырассипе таччăн çыхăнтармалла, перекетлĕх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе кашни рабочие харпăрхăйне обязательствăсем илтермелле.

Хамăрăн шалти мĕнпур резервсене хускатса ĕçе яма, перекетлĕхĕн çирĕп режимне туса хума эпир пултаратпăр тата ăна çапла тумалла та. Çак майпа вара хамăрăн тăван çĕршывăн вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи хăватне татах та ытларах çирĕплетĕпĕр, фашистла вăрăхурахсене çапса аркатассине хăвăртлатăпăр.

Чарыков юлташăн докладне сÿтсе явма прение 13 çын хутшăнчĕ.

Тухса калакансем перекетлĕх режимĕ хаяр вăрçă вăхăтĕнче çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртрĕç тата хулари предприятисемпе учрежденисенче çак енĕпе пулса пыракан çитменлĕхсене тишкĕрчĕç.

— Перекетлĕх ыйтăвĕсем çине,—терĕ хăйĕн сăмахĕнче Н-ски заводăн директорĕ,—эпир çителĕксĕр çавăрăнса пăхнă. Чĕртаварсем пирĕн нумай пĕтнĕ, браксем, производствăпа çыхăнман вырăнсăр простойсем пулнă. Халĕ ĕçсем улшăнчĕç. Заводри партипе хуçалăх активĕн канашлăвĕ хыççăн мастерсемпе цехсен начальникĕсем лимит карточкисем турĕç, халĕ ĕнтĕ вĕсем хăйсем мĕнле материал илнине тата вăл материалран мĕн тунине çирĕппĕн шута илсе пыраççĕ.

Маленкин юлташ (Наркомлесăн главнăй инженерĕ) Чăваш республикинчи автопарка бензинран скипидар çине куçарма кирли çинчен калать. Скипидара вырăнтах тума пулать. Çавăн пекех Маленкин юлташ ĕçленĕ çусемпе усă курасси çинчен те калать.

Водосвет директорĕ Лысенко юлташ хулара электроэнергие мĕнле расходланине юлашки вăхăтченех контроллесе тăманни çинчен чарăнса тăрать.

Золотников юлташ (Наркомфин) укçатенкĕ тĕлĕшпе çирĕп экономи тытса пыма кирли çинчен калать.

Перекетлĕн ĕçлесси—чи малтан культурăллăн ĕçлесси пулса тăни çинчен хулари пир-авăр фабрикин директорĕ Логинов юлташ калать. Доклад тăрăх прение çавăн пекех тата Башкиров (тир-сăран комбиначĕ), Каменецкий (чăлха çыхакан фабрика), Рудман (техно-ткацки фабрика) т. ыт. юлташсем те тухса калаçрĕç.

Перекетлĕхĕн çирĕп режимне пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе парти активĕн пухăвĕ практикăллă мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

противникăн çав группине пĕтерессшĕн çапăçаççĕ.

Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри хăшпĕр участоксенче пирĕн войскăсем активлăн çапăçса противникăн темиçе дзотне, траншейисене тата окопĕсене тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем çапăçура нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ тата гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçурах пирĕн танкистсем персе тата гусеницăсемпе таптаса 12 противотанковăй орудие, хăйсем тĕллĕн çÿрекен 2 туппа, 8 пулемета тата нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне яхăн пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Коновалов юлташăн подразделенийĕнчи разведчиксен группи противникăн окопĕсене кĕрсе кайнă та тытăçура итальянецсен 70 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерипе, минометсемпе, пăшалсемпе тата пулеметсемпе сайра хутран персе тăнă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 2 самолетне персе ÿкернĕ, çĕр çинче 20 автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр рота таран сапаласа янă. Нимĕçсен тылĕнче пĕр кĕпере çĕмĕрнĕ тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн чаçсем пăшалпа, пулеметпа тата артиллерипе персе тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, миномет батарейине пĕтерсе тăкнă, противникăн темиçе дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче Бугачев юлташ командир пулса тăракан подразделенири снайперсем темиçе кун хушшинче нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 6 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Витебск облаçĕнчи партизансен отрячĕ пĕр совхозра вырăнаçнă противникăн гарнизонне тапăннă. Партизансем нимĕçсен 45 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 28 салтакĕпе офицерне амантнă. Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен тепĕр отрячĕ оккупантсемпе кĕрешсе 120 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Çав отрядри пĕр партизан шоссе çине минăсем хунă. Çав минăсем çинче противникăн автомашини сирпĕнсе кайнă. Икĕ офицер, 6 салтак вилнĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Батайск хулинче тата унăн сывăхĕнче пурăнакан 140 çынна çар укреплениййĕсем тума илсе кайнă. Гитлеровецсем совет çыннисене пĕр кантармасăр талăкра 16—18-шар сехет ĕçлеттернĕ, выçăпа асаплантарнă, вĕсене хĕненĕ, мăшкăлланă. Выçă пирки тата хĕненине пула 19 кун хушшинче 47 çын вилнĕ. Ĕçлесе пĕтернĕ хыççăн фашистла ирсĕрсем чĕрĕ юлнă 93 çынна баржа çине лартнă та вĕсене çаппа-çарамаслантарса пурне те шыва путарнă.

* * *

Либрамон станцийĕнчен инçех мар вырăнта (Бельгия) нимĕçсен войскисене хĕвелтухăçнелле илсе каякан поезда крушени пулнă. Паровозпа 6 вагон минăсем çине пулса çĕмĕрĕлнĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Заданисене ирттерсе тултараççĕ

КАНАШ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри цехсем хушшинче Октябрь уявĕ ячĕпе пыракан ăмăрту лайăх результатсем парать. Токарь юлташ Егоров пыракан ĕçре уйăхри 2-мĕш вунă-кунлăхри задание 110 процент, Соколовский юлташ цехĕ 107 процент тултарнă. Юлашки уйăхра уйрăмах ыйăшсем хаскалакан цех аван ĕçлет. Вăл цех хăйне панă заданисене кашни вунăкунлăхра 182 процент тултарса пырать. Çавăн пекех ремонтно-механически, тата ремонтно-утилизационнăй цехсем лайăх ĕçлеççĕ. Вагонсем юсамалли цехра ĕçлекен Шевалкин юлташăн 3-мĕш номерлĕ комплексĕ малта пырать. Ку комплекс графика производствăн тĕп законĕ вырăнне хурса пĕр пек тикĕслĕхпе ĕçлет, заданисене тăтăшах ирттерсе тултарать.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿсрĕ

ИЕПРЕÇ. Октябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Чугунçул транспорчĕ валли çак çулăн юлашки 6 уйăхĕнче вутă хатĕрлемелли задание Иепреç районĕ срокчен тултарнă ятпа ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ янă саламлă телеграмма пирĕн леспромхозри рабочисемпе работницăсене тата тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. Телеграммăна вуласа панă хыççăн рабочи Алим Аксенов юлташ, лучковăй пăчкăпа ĕçлесе, кун каçа 16 кубометр таран вутă хатĕрлеме пуçларĕ. Партин 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозран ĕçлеме килнĕ Василий Чураков юлташ та кунсерен 11—12 кубометр вутă хатĕрлет. Август уйăхĕнчен вара, ĕçлесе, вăл пурĕ 390 кубометр хатĕрленĕ. «Молния» колхоз членĕ В. Ефремов юлташăн кулленех ĕç тухăçлăхĕ те 7 кубометртан кая мар. Вăрмантри рабочисем пуçламăш кăтартусене çавăн пек тухăçлă ĕçлесе пуçласа пынипе Иепреç районĕ хăйне панă заданисене ирттерсе тултарчĕ. Шупашкар районĕ заданине вĕçлесе пырать.

П. ФЕДОРОВ,
Леспромхоз директорĕ.

Стахановецсене премилеме

ВАРМАР. Аслă уява тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн кĕрешнĕ май инвалидсен «Трудовик» артелĕ лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Артель иртнĕ уйăхри плана 121 процент тултарнă.

Çак кунсенче артель членĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта вĕсем хăйсен 9 уйăхри ĕçĕсем çинчен сÿтсе-яврĕç. Артель членĕсем ку таранччен ĕçсемпе лăпланса лармасăр çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулчĕç. Ныйдсĕсем суракан цех заведующийĕ А. Павлов юлташ октябрь уйăхĕнче плана 150 процент тултарать.

Артелĕн малта пыракан работникĕсене премилеме Коопинсоюз 1.560 тенкĕ укçа уйăрнă. Артель правленийĕ çав укçапа пурĕ 17 стахановеца премилеме палăртнă.

В. ШАХАЛОВ.

Ĕçре йĕркелĕх кирлĕ

ЭЛĔК. («Чăваш Коммуни» корр.). Куракăшри «Безбожник» колхоз кăçал тыră вырса пуçтарас ĕçе ытти çулхисенчен лайăхрах туса пычĕ. Ыраш, тулă, сĕлĕ, пăрçа культурисене кĕске вăхăтрах вырса кĕртнĕ. Паянхи куна чылай культурăсене çапса пĕтернĕ (88 гектар çапнă), тата 65 гектар çинчи тырпула кăна çапмалла.

— Тыră вырнă чухне кашни колхозник мĕнпур вăя хурса ĕçлени курăнчĕ, уя ваттисем те, питĕ çамрăккисем те тухрĕç,—тет колхоз председателĕ Ильин юлташ.

Уйри тырпула пуçтарса кĕртнĕ-кĕртменех колхозниксем çĕрулми кăларма, пахча-çимĕçсем пуçтарма тытăннă. Ку ĕçе те вăхăтра вĕçленĕ. Çакă ĕнтĕ колхозниксем ĕçе активлăн хутшăнса организованно туса пынине пĕлтерет.

Анчах колхоз правленин членĕсем колхозниксен анлă массине пур чухне те мар тĕрĕссĕн организацилесе пыраççĕ-ха. Юлашки вăхăтра вăл уйрăмах хытă палăрать. Колхоз, уйри тырпула вăхăтра пуçтарса кĕртнĕскер, халь чылай ĕçсене вăраха ячĕ. Сăмахран, 106 гектар çинче кĕрхи çĕртме тумалла пулсан, октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 30 гектартан ытла мар сухаланă. План тăрăх кашни кун сухара 12 лаша ĕçлемелле, анчах 7—8 лаша çеç ĕçлет, тата суха тăваканесем ĕç кунĕпе туллин усă курмаççĕ, ăмăртса ĕçлемеççĕ. Вĕсен ĕç тухăçлăхне ÿстерес тесе колхоз правленийĕ те, бригадирсем те нимĕн те тумаççĕ. Бригадирсем кĕрхи çĕртме тунă çĕре тухса та курмаççĕ.

Авăн çапас ĕç те сÿрĕккĕнчĕ, государство умĕнчи парăмсене парса татас ĕç те юлашки кунсенче начар пулса пырать.

Халĕ колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем те чылай. Домна Шлябина, Палестина Плотникова, Анна Николаева колхозницăсем августăн 15-мĕшĕпе октябрĕн 15-мĕшĕ хушшинче 32 ĕçкунĕнчен ытла тăвайман. Наталия Васильевăн колхозра ĕçлеме пур майсем те пур, унăн 8 çулхи ача çеç. Анчах вăл тăтăшах пасартан пасара çÿрет, юлашки 2 уйăх хушшинче 24 ĕçкунĕ çеç тунă. Мĕншĕн-ха колхоз правленин вĕсене айăплас мар? Вĕсем кахалсем вĕт?!

Колхозра куллен тăрăшса ĕçлекен колхозниксем сахал мар. 70 çулхи Иван Воробьев, акă, кăçал 180 ĕçкунĕ тунă. Юлашки 2 уйăхра кăна вăл 61 ĕçкунĕ ытла тунă. Вăл пур ĕçе те активлăн хутшăнать. Çавăн пекех 79 çулхи Павел Самсонов та лайăх ĕçлет. Унăн ывăлĕ фронтра, килте кинĕ тата 3 пĕчĕк ача пур. Çапах вата колхозник кăçал 100 ĕçкунне яхăн ĕçлесе тунă, унăн кинĕ Ульяна Самсонова та 164 ĕçкунĕ тунă. Ытти колхозниксен те çавсем пек ĕçлемелле.

Колхозниксем Октябрьти социализмлă аслă революци XXV çул тултарнине çитĕнÿсем тунипе, фронта ытларах пулăшнипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Колхоз правленийĕн вĕсен ĕçне тĕрĕс йĕркелесе пымалла. Ĕçе йĕркелени колхозри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме тата çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшмалла.

Х. ЛИСИН.

Ялхуçалăх выставкине хатĕрленеççĕ

ИЕПРЕÇ. Районри колхозсенче ялхуçалăх выставкине хатĕрленес ĕç анлăн сарăлса пырать. Колхозсем выставкăна уйхир ĕçĕнче тата обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

«Молния» колхозăн ăратлă ĕнесен фермине районри ялхуçалăх выставкин кандидачĕ пулма çирĕплетнĕ. Ферма кăçал октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кашни ĕне пуçне вăтам шутпа 1.700-шер литр сĕт суса илнĕ, фермăри ĕнесенчен нумайĕшĕ кăçал 2.000-шер литр ытла сĕт параççĕ. Сурăх ферминче ĕçлекен колхозница Варвара Максимова выставкăна паха çитĕнÿсемпе тухать. В. Максимова юлташ кашни сурăхран 4,4-шер килограмм çăм илнĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулхи плана пур тĕрлĕ выльăхсем енĕпе те тултарнă.

«Чувашия» колхозри сысна фермин (заведующийĕ А. Тарасов юлташ) пысăк тухăçлă ăратлă сыснасем ĕрчетет. Ку фермăри ама сыснасем (пĕр çултан иртнĕскерсем) кашни 120-шер килограмм туртаççĕ. Кашни амаран кăçал 18-шар çăвăр илсе ÿстернĕ.

«Ударник» колхозăн конюхĕ А. Яргаев юлташ çирĕп те тĕреклĕ лашасем çитĕнтерет. 1937 çултанпа пĕр улшăнмасăр конюхра ĕçлесе Хĕрлĕ Çара вуншар лаша ÿстерсе панă. Кăçал 4 тиха пăхса ÿстерет.

«Правда» колхоз ялхуçалăх выставкине тырпул тата пахча-çимĕç енĕпе тухать. Ку колхоз ыраша кĕрхи тулла кăçал вăтам шутпа гектартан 100-шер пăт ытла туса илнĕ. Çĕрулми гектартан 858 пăт тухнă. Ф. Тарасов юлташ пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ пулса ĕçлет. Çак бригада кăçал хăяр, помидор, купăста, кишĕр нумай туса илнĕ. Гектартан купăста 300 центнера яхăн, хăяр 155 центнер туса илнĕ. Çапла вара колхоз пахча-çимĕçсенчен темиçе вуншар пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Нумай колхозсем районри ялхуçалăх выставкине ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе çитернипе, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе памалли плансене тултарнипе, выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илеççĕ. Октябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне «Правда», «Коминтерн», «Большевик», «Красный фронтовик» тата ытти колхозсем государствăна тыră парса татнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă.

Дм. МИХАЙЛОВ.

УЯВ УМĔНХИ ĂМĂРТУРА

ТĂВАЙ. Татмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозăн бригадисем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене хăвăртрах вĕçлеме тăрăшаççĕ. Бригадăсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса конкретнăй обязательствăсем илнĕ.

Пĕрремĕш бригадăри колхозниксем иккĕмĕш бригадăри колхозниксемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Бригада çурхи тырăсене тахçанах çапса пĕтернĕ, халĕ октябрĕн вĕçĕччен кĕрхи тырăсене те пĕтĕмпех çапса илессишĕн тăрăшаççĕ. Бригадăра ĕç дисциплини çирĕп. Кашни колхозник, колхозница куллен тăрăшса ĕçлеççĕ. Машиновед С. Герасимов юлташ молотилкăна пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерет. Авăн çапнă çĕрте Т. Герасимова, М. Григорьева икшер норма тултарса пыраççĕ. Государствăна памалли тырра турттарма чи лайăх ĕçлекен колхозниксене уйăрнă.

В. ИЛЬИН.

Оборона фондне

Калининăри лесничество коллективĕ çак кунсенче оборона фондне 300 пăт çĕрулми хывrĕ. Çĕрулмине пăхса ÿстерес тĕлĕшпе уйрăмăнах И. Павловăпа И. Шахалова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

И. Шахалова юлташ кунта фронта кайнă упăшки вырăнне ĕçлеме юлнă. Вăл хăйне çирĕплетсе панă лашасене юратса пăхать, уяв ячĕпе вăл парне панă — 54 килограмм çĕрулми, 28 килограмм купăста хывнă. Çавăн пекех лесничи Гр. Павлов юлташ 2 килограмм пыл, 54 килограмм çĕрулми, 32 килограмм купăста, 5 килограмм сухан, 200 грамм махорка панă.

Б. ШОРНИКОВ.

Ют çĕршывсенче

Швеци полицийĕ тарăхтармалла йĕркесĕр хăтланни

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци полицийĕ совет гражданинне Сидоренкăна, «Интуристăн» Стокгольмри сотрудникĕ пулса ĕçлекенскере, пĕр сăлтавсăрах илсе кайса хăй патĕнче тытса тăрать. Илнĕ хыпарсем тăрăх, Швеци полицийĕ Сидоренко тĕлĕшпе Швецире халиччен усă курман майсемпе, тарăхтармалла майсемпе усă курать: законсăр хăтланать тата вăйпа пусмăрлать. Гитлерла гестапон методĕсемпе усă курса, Швеци полицийĕн чиновникĕсем Сидоренкăна мăшкăллаççĕ, хĕнеççĕ, ăна полицин провокациллĕ ыйтăвĕсем çине полицие кирлĕ ответсем партарасшăн. Сидоренко полицин темтепĕр шухăшласа кăларса çырнă протоколне алă пусма килĕшмесен, полицин провокациллĕ ыйтăвĕсем çине ответлеместĕп тесе каласан, полици ăна тата тискеррĕн пусмăрлама тытăннă, ăна «йышăнатăп» тесе калаттарма тăрăшнă.

Швеци сучĕн представителĕ полици çапла законсăр хăтланнине тата вăйпа пусмăрланине пĕлет, анчах та вăл çав йĕркесĕрлĕхсене пĕтерсе лартма нимĕнле мера та йышăнман çеç мар, вăл Сидоренко протестленине хирĕç çапла каласа хунă: допрос тунă чухне кирлĕ пулсан, малашне те вăйпа усă курĕç, тенĕ.

Совет Союзĕн Стокгольмри дипломатиллĕ миссийĕ Сидоренкăна Швецин гитлерла методсемпе усă курма тытăннă полицийĕ законсăр хăтланнинчен хÿтĕлеме кирлĕ мерăсем йышăннă.

Украина халăхĕ оккупантсен пусмăрĕ айĕнче асапланса пурăнать

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС) Украинăн оккупациленĕ районĕсенче тухса тăракан гитлерла хаçатсем çырнинчен çакă курăнать: совет гражданĕсем гитлерла оккупантсен пусмăрĕ айĕнче асапланса пурăнаççĕ, хуласенчи выçăпа аптăранă халăх çимелли тупас тесе чупса çÿрет. «Дер нейе таг» хаçат «отчет» пичетленĕ, çав отчетра гитлерла корреспондент çапла çырать: «Чугунçулпа çÿрекен йышлă салтаксем хушшинче гражданла çынсене те нумай курма пулать». Эпир вĕсене куçса çÿрекен чухăнлăх тесе ят паратпăр. Нимĕç полицийĕ вĕсемпе яланах кĕрешет. Кашни станцирех чĕрене çуракан ĕçсем пулса иртеççĕ. Хĕрарăмсемпе ачасем тата стариксем, çĕтĕк-çурăк тăханнăскерсем, станцисем çумĕнче тултах çывăраççĕ. Вĕсене товарнăй вагонсене лартса ăсатаççĕ, унта тăвăр та шăршлă».

Партизанла вăрçăн çулăмĕ вăйлăрах та вăйлăрах ялкăшать. «Дейче Украине цейтунг» хаçат «совет партизанĕсем усалли» пирки ÿпкелешсе çырать. Гитлеровецсем «партизансем ăçта тăнине пĕлтерекен çынсене материальнăй тупăш пама тата тавар панă чухне ыттисенчен маларах пама» сăмах параççĕ. Анчах çав хаçат каланă тăрăхах, гитлеровецсем халăха çапла майпа хăйсем енне çавăрма хăтланни халăха тарăхтарать, партизансене пĕтĕм халăх анлăн пулăшса тăрать.

ФРАНЦИ РАБОЧИЙĔСЕМ ГЕРМАНИЕ КАЯСШĂН МАР

ЖЕНЕВА, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Виширен пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем тата Лаваль Германири предприятисенче ĕçлеме ултавпа тата вăйпа пухнă француз рабочийĕсен пысăк мар ушкăнĕсем вокзалсенчен тата поездсенчен тарни ÿссе пырать. Çавăнпа влаçсем çакăн пек распоряжени кăларнă: рабочисем Германие каяссинчен çавăн пек пăрăнса юлнине çартан тарнипе пĕрех шутламалла, тенĕ.

Франци рабочийĕсем Гитлерăн тарçисем пулмаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лавалĕн пропагандисчĕсем хăшпĕр предприятисенче рабочисене Германие кайма чĕнсе сăмахсем тухса каланă. Анчах та çав сăмахсем нимĕн сĕр пĕтсе ларнă.

Лаваль Франци железнодорожникĕсен пĕр пайне Германие яма хăтланнине пула Францин оккупациленĕ пайĕпе оккупацилемен пайĕнчи пысăк станцисенче мастерскойсемпе депосенче забастовкăсем пулнă. Çак юлашки эрне хушшинче пĕтĕмпе 10 пин француз железнодорожникĕ забастовка тунă. Вăйлă стачкăсем Льежре, Тулузăра, Марсельре, Греноблере, Шамберире, Клермон-Ферранра пулса иртнĕ. Лионра тата ытти хуласенче çав забастовкăсене машинăсем тăвакан темиçе заводри рабочисем те хутшăннă.

ЛАВАЛĔН «ОППОЗИЦИЕ ПУСАРМА» ХУШАКАН ПРИКАЗĔ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Лаваль Францин оккупацилемен пайĕнчи облаçсемпе провинцисен префекчĕсене васкаса канашлăва пухнă. Францире ларутăру çивĕчленнине кăтартса, Лаваль префектсене «ĕненменнине тата оппозицире тăрассине» пĕр шеллемесĕр пусарма тата Германие яма пур майсемпе те рабочисем пухса пама хушнă.

АНГЛИРЕ 18 ÇУЛТИ ÇАМРĂКСЕНЕ ÇАРА ИЛЕÇÇĔ.

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Англин ĕç министрĕ тата национальнăй повинность министрĕ Бевин общинăсен палатинче король çĕнĕ Указ алă пусса çирĕплетни çинчен пĕлтернĕ. Çав Указ тăрăх октябрĕн 22-мĕшĕнчен 18 çула çитнĕ çамрăксене çар ретĕнче обязательнăй йĕркепе пулмалли законпа çара илеççĕ.

Германире тата Европăри оккупациленĕ çĕршывсенче тыră начар пулнă

ВАШИНГТОН октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çĕрĕç министерствин даннăйĕсем тăрăх, Балканра, Европăн вăтаçĕрĕнчи пайĕсенче тата Данире тулă пĕлтĕрхинчен начартарах пулнă, пĕлтĕр унта тулă начар пулнă.

Чикагора тухакан «Сэн» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, уяр çанталăк тăнă пирки тата рабочисем çитменнине пула, Германипе Италия 1942—1943 çулсенче Балканри çĕршывсенчен тĕштырăсем пĕлтĕрхинчен виçĕ хут сахалтарах илеççĕ. Румынире кукуруза пĕлтĕрхинчен пĕр миллион тонна сахалтарах пулнă; тулă пĕлтĕрхинчен начартарах пулнă. Румынире хăйне тулăпа кукуруза 6 миллион тонна кирлĕ, кăçал вĕсем 5 миллион тоннăран ытла пулман, вăрçăччен хăйне илсен — вăрçăччен вĕсем 7,5—8 миллион тонна пулнă. Румыния Германие тĕштыră нумай пама пулнă, анчах та унăн хальхи запасĕсем Румынире вырăнаçнă нимĕç войскисене тăрантарма çеç çитеççĕ. Болгарире тулăпа кукуруза вăтамминчен каярах пулнă. Болгари хресчĕнĕсене хăйсем валли ĕлĕкхи вăхăтра çуллен çинин пĕчĕк пайне çеç хăварма ирĕк панă.

ГЕРМАНИН СУЯ ПĔЛТЕРĂВНЕ АМЕРИКА СИРСЕ ПАРАХАТЬ

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн Европăри войскисен командующийĕ генерал-лейтенант Эйзенхауэр çакăн пек заявлени пичетлесе кăларнă: сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче тĕнĕл держависем Америка войскисене турттарса пыракан темиçе парохода торпеда ярса путарнă тесе пĕлтернĕ; каярахпа çак пĕлтерĕве тепĕр хут каласа панă: «Çапла калани, — тенĕ заявленире, — пурнăçпа пĕрех те çыхăнса тăмасть, вăл тĕнĕл держависен пĕлтерĕвĕсем суйине кăтартса паракан тепĕр пример çеç пулса тăрать. Америкăн çул çинче пулнă салтакĕсем пурте ăнăçлăн Англие пырса çитиччен тата эпир Германи пĕлтерĕвĕсем пĕтĕмпех суйине пĕлсе çитиччен çак заявление пичетлесе кăларман», тенĕ.

Шкулсенчи çитменлĕхсене пĕтермелле

ВĂРНАР. Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренÿ çулĕнче районри шкулсем хăйсен ĕçĕсене кăтартуллăн туса пыраççĕ. Уравăшри вăтам шкулти учительсем (директорĕ А. Филиппов) 8 çула çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтарнă, шкула çÿресси тата вĕренÿ пахалăхĕ кăçал иртнĕ çулхинчен чылай лайăхрах. Учительсем уроксене тĕплĕн хатĕрленсе пыраççĕ.

Кĕçĕн Кипек, Кольцовка, Хапăс тата Кÿстÿмер шкулĕсенчи учительсем те ачасене вĕрентес ĕçе лайăх, пысăк тимлĕхпе туса пыраççĕ.

Анчах та районри шкулсенче кăçал та çитменлĕхсем нумай-ха. Чăваш АССР Совнаркомĕпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕ иртнĕ çул шкул тулашĕнче юлнă тата çуркуннехи испытанисенче начар отметкăсем илнĕ ачасене çуллахи каникул вăхăтĕнче вĕрентме хушса хăварнăччĕ. Çак кăтартусем çине хăшпĕр шкулсем тивĕçлипе çавăрăнса пăхманнине пула, кăçал 705 ачана пĕр класрах иккĕмĕш çул вĕренме хăварнă. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче шкул тулашне юлнă 1.102 ачана пĕтĕмĕшпех шкула явăçтарса çитермен-ха.

Ирбитовецсен примерĕпе шкул ачисене тумтир тата урана тăхăнмаллисем хатĕрлесе парса шкула вĕренме çÿрессине хăпартас тĕлĕшпе районри шкулсенче ĕç калама сук япăх тăрать. Вăрнарти атă-пушмак çĕлекенсен артелĕн, райисполком хушнипе, чи малтан шкулсен заказĕсене тумалла пулнă. Анчах артель руководителĕсем халĕ те çак ĕç çине чунсăрланса пăхаççĕ. Çапла, Вăрнарти туллимар вăтам шкул директорĕ Илюкин шкул ачисен ботинкисене (36 мăшăр) юсама августăн 15-мĕшĕнчех леççе панă, анчах çав ботинкăсене артель халĕ те юсаман.

Иртеменкасси, Пăртас, Кăмаш шкулĕсен директорĕсем «ачасем шкула çăпата суккипе çÿреймеççĕ», теççĕ. Анчах вăрман касса пушăтлăх хатĕрлесси çинчен кунта шухăшламаççĕ.

Хĕл çывăхарса килет. Районри нумай шкулсен вутă çителĕклĕ таран çук. Хăшпĕр колхозсем шкулсене вутă хатĕрлесе турттарса парас ĕç çине çавăрăнса та пăхмаççĕ. Кĕçĕн Кипекри вăтам шкул валли «Память Ленина», «Волга» тата «Большевик» колхозсен 150-шар кубометр вутă турттарса памалла. Çак ĕçе тума халĕ пĕр колхоз та тытăнман. Хăшпĕр шкулсенче чÿречесем лартас, кăмакасене юсаттарас, шăтăк-çурăксене питĕрес ĕçсене çителĕксĕр туса пыраççĕ. Çапла, сăмахран, Кăмашри туллимар вăтам шкулта кăмакасене кăçал юсаттармалла пулнă, Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕн кăмакисене йăлтах пăсса çĕнĕрен лартмалла пулнă. Ялсоветсемпе колхозсем çак ĕçсене тума 1942 çулхи март уйăхĕнчех хăйсем çине обязательствăсем илнĕччĕ, анчах ĕçне паянхи кун та туман.

Районри шкулсенче паянхи куна 213 учитель ĕçлет. Вĕсенчен çурри ытла шкулсенче пĕрремĕш çул ĕçлеççĕ. Çамрăк учительсене методикăллă пулăшу парасси, учительсем çитменнине пула урăх предметсем те вĕрентекенсене пулăшасси кирлĕ пек пулса пымаççĕ-ха. Хăшпĕр шкулсенче (сăмахран, Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнче) тăватшар учитель çитмест. Çапла пулин те райçутĕç пайĕ шкулсене учительсемпе комплектласа çитерес тĕлĕшпе васкамасть. Калас пулать, пуçламĕш классем валли пирĕн кадрсем сахал мар, вĕсене тупса ĕçе вырăнаçтарма çеç пĕлмелле. Кĕçĕн Кипек ялсоветĕнче секретарь пулса М. Трофимова, ялти кооператив уйрăмĕнче продавщица пулса Е. Андреева юлташсем ĕçлеççĕ. Иккĕшĕ те вĕсем учительсем, иртнĕ çулсенче I—IV-мĕш классенче ĕçленĕ. Кун пек тĕслĕхсем ытти вырăнсенче те пур.

Чылай шкулсенче хут тата çырмалли хатĕрсем питех те çителĕксĕр. Суту-илÿ организацийĕсем шкулсене памалли тетрадьсене уйрăм вырăнсене нумай расходланă. Паллах, райçутĕç пайĕ ку тĕлĕшпе ответлăхран пăрăнса юлма пултараймасть.

Шкул ачисем — пысăк вăй. Çамрăксем вăрçă вăхăтĕнче, пуринчен ытла колхозниксен ĕçри хастарлăхне хăпартма пулăшаççĕ. Çакна шута илсе, иртнĕ уйăхра ВЛКСМ Центральный Комитечĕ шкулсенчи пионерсен ĕçĕсене чĕртсе ярасси çинчен конкретнăй кăтартусем парса хăварчĕ. Иртнĕ çулта пионерсен организацийĕсем йĕркеллĕ ĕçлерĕç, кăçал та начар ĕçлеме нимĕнле сăлтав та çук. Апла пулсан та, ВЛКСМ Вăрнар райкомĕпе райçутĕç пайĕ çак ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ-ха. Районри нумай шкулсенче пионер отрячĕсем çук, ачасем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ.

Шкулсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе комсомол организацийĕсем пысăк вырăн йышăнмалла. Анчах комсомолăн шкулсенчи пуçламĕш организацийĕсем ĕçе тивĕçлипе тытăнман-ха. Йăлтах урăхла, хăшпĕр организацисем саланса кайнă. Сăмахран, Кĕçĕн Кипек вăтам шкулĕнчи ВЛКСМ Комитечĕн секретарĕ Егоров Хĕрлĕ Çара кайнă чухне комсомол организацин документĕсене комитет членне Верховцевăна парса хăварнă. Верховцева урăх шкула куçнă май документсене старший вожатăй пулса ĕçленĕ С. Беляевăна панă, Беляевăна урăх вырăна куçарнă та, комсомол документĕсене вăл кама парса хăварнине халĕ ниепле те шыраса тупаймаççĕ. Шкулсенчи комсомол организацийĕсен ĕçне халех çĕклемелле. Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренÿ çулĕнче учительсемпе комсомолецсен тата пысăкрах çитĕнÿсем тума тăрăшмалла.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

НАЧАЛО ЗАНЯТИЙ на дневных курсах шоферов в г. г. Чебоксарах и Канаше—2-го ноября.
Управление автотранспорта при Совнаркоме Чуваш. АССР

ПУНКТУ ЗАГОТЗЕРНО
срочно требуются на постоянную работу: шофер, возчик на лошадях, грузчики, плотники, чернорабочие.
При пункте имеется своя столовая.
ДИРЕКЦИЯ.

Чебоксарскому Горпромкомбинату требуются для трикотажного производства работницы: чулочницы, трикотажницы, мотальщицы ученицы.
Рабочие обеспечиваются общежитием и столовой.

ЧУВАШДРЕВПРОМ СОЮЗУ ТРЕБУЮТСЯ на постоянную работу: финансист, бухгалтер-ревизор, техник-строитель, инженер или техник-лесохимик, инженер-механик-энергетик, инженер по механической обработке дерева, механик по газогенераторным установкам и конюх.
Обращаться по адресу: Заводская ул. дом 12.

Чувашский Отдел Всероссийского О-ва слепых при Наркомсобесе ЧАССР доводит до сведения всех инвалидов-слепых, что мастерские Наркомместпрома ЧАССР в гор. Ядрине, Баймашкине Красно-Четаевского района, мастерская Кустпромсоюза в Ениш-касах Красноармейского района и артель „Социализм“ Чувашкоопинсоюза в гор. Мар-Посаде производят набор учащихся производственного обучения по следующим профилям: веревочное и корзиночное производство. Учебно производственные мастерские за период обучения выплачивают стипендию.
Учащиеся обеспечиваются квартирой и столовой. Срок обучения 3 месяца.
Заявления направляйте по адресу: г. Чебоксары, Ярославская, 13.
Чувашский отдел В. О. С.

В г. Чебоксарах 21 октября пропала лошадь. Приметы: мерин, темногнедой масти, во лбу звездочка, между ноздрями темное пятно, задние ноги выше щетки белые.
Знающих местонахождения ее просим сообщить по адресу: г. Чебоксары, Театральная 1/5, Торгово-кооперативная школа.
ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—29, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1033 Типография № 1 Управления [illegible] при СНК ЧАССР. Зак аз № 2. Ф 6. 53 84 п. л.